84.09(=Чув)
В55
1-48331

КЛАВДИЯ ВИШНЕВСКАЯ

# ПУРНĂÇ ИККĔ КИЛМЕСТ

*Баллада*

Шупашкар
2015

Национальная библиотека ЧР
4-048331

82-1
)-5

В 55 К.И. Вишневская. ПУРНĂÇ ИККĔ КИЛМЕСТ (Жизнь не приход
дважды). Баллада. – Чебоксары. 2015.

Баллада о жизни начала XXI века.

Проверено 11 АКТ 2017

4-48331

Национальная библиотека
Чувашской Республики

К84.09(=Чув)
В55



# ВИШНЕВСКАЯ
## Клавдия Ивановна

*журналист-поэт, куҫаруҫӑ, литература критикӗ, драматург, вуннӑ ытла ача-пӑча тата аслисен сӑвӑ кӗнекисен, критика статьисен пуххисен тата монографи авторӗ*

# 60 ҫул

## ПУРНӐҪ ИККӖ КИЛМЕСТ

*Чӑвашӑн ӑспа ӗҫченлӗхне*
*Ҫухатасмарччӗ ӗмӗрне.*

Шупашкар – 2015

# ПУРНĂÇ ИККĔ КИЛМЕСТ

*Кĕлленнĕ чун балладиi*

*Çăлтăр ӳкнĕ тĕле çитеймерĕм.*
*Манăн телей çавăнта ӳкрĕ-ши?*
*Çăварта ун тути – йӳçĕ эрĕм:*
*Телее эп çухатрăм, ӳрĕк-ши*?*

* *кахал*

1

Пĕрре сӳннĕ çăлтăр текех ӳкмĕ:
Тупăнаймĕ çухалнă телей ман.
Пысăкланчĕ пĕчĕк пулнă хӳхĕм,
Мĕн-ма пытăм-ши çӳплĕ айлăма?

Çӳлте пулмашкăн тӳр килеймерĕ:
Çăкăр пулсан та çитет терĕм-ши?
Чун ĕçпе лăпланма пĕлеймерĕ:
Чуна кăтăр кăшлать суккăр шăши!

Чулпа персессĕн çăкăр кĕтмерĕç
Тапăнса чуна хуратакансем.
Мĕнех мана манса кайччăр, терĕм:
Хăватлă чунăма астăваççех:
Йĕплĕ шăлан – сăвăç пурнăçĕ тесе...

Вĕлтренпе вĕтелеççĕ чăтатăн –
Ыран ăнланĕç-ши тесе паян.
Чулпа перекенсем-иç пит паттăр,
Мĕншĕн сăвăç кăна çаплах наян?

Пурпĕрех çăмăл çул шырамастăп.
Инкекне «инке» парать пулсан. Ах,
Пурнăçа татах та юрататăп:
Маншăн иккĕ килмест – татмастăпах.

Сăмаха кулса шĕвĕртейреççĕ,
Хăшсем тăваççĕ темле те чунне.
Çавсемех амăшне те тиркеççĕ –
Ăçтан юратчăр ют çын амăшне?

Калта-çĕлен тулли вырнаçайнă
Çылăхлă çынсен мĕскĕн чĕрине.
Кам мĕнле пĕлет, çапла пайланнă –
Халь хатĕр сутма тăванĕсене.

Ĕçтеше сутсан ĕçсе çиеççĕ,
Хупса хураççĕ айăпсăр çынна.
Çут çанталăк, чун чĕре, илемлĕх
Хыпарсăр çухалать укçашăнах.

Чăрсăрах çав чунсăрлă вĕрилĕх –
Мĕн тăваççĕ-ши ырă чунлисем?
Хăшăсенче хамелеон чирĕ –
Пур чунсăрлăха парăнакансен.

Айăпĕ камра? Чунрах шыраççĕ:
–Ырриех айăпли пулать,– тесе.
Хĕвелĕмре хĕртĕнме памаççĕ
Чĕре анинче кăвайт тивретсе.

Çунакан вутпала пĕçертеççĕ
Тăшман пек пач курман, илтменнисем.
Мĕншĕн-ши çавăн пек пит хĕсеççĕ?
Ларчĕ-ши çĕр-анне пĕчĕкленсе?

Питех тăвăр пулас пурăнмашкăн
Хăшне-пĕрне чунлисемпе пĕрле.
Тертлентереççĕ çемьене маншăн
Сăлтавсăр тапăнса кĕрле-кĕрле.

Чунĕ чирлĕ тесе улталаççĕ
Чĕр поэт пулнишĕнех халăхпа.
Камсем сăвăça пит кураймаççĕ,
Çавсем укçа шăласшăн шăпăрпа.

Чуна хупаха хупса хураççĕ:
Укçашăн тухтăрсем те хăрушла!
Чăн чирлине ма-ха сыватмаççĕ?
Психозли юлать ĕмĕрех çапла.

Чирлине сыватнине курасчĕ....
Чăн пулман-ха ун пекки халиччен.
Психозне ... сирсен те çын асĕ
Сывалаймĕ кĕске ĕмринче.

Кам-кама пĕтерет кураймасăр
Ăмсанса, вăрласа пурăнма?
Пĕр-пĕрне-иç пĕтереççĕ майсăр:
Тăван – тăвана, тăшман – тăшмана.

Суйса – улталаса чапа тухасшăн
Пуян пулса ĕмрипех ыр курма;
Тăрăшать тăшманĕ пуç пуласшăн
Хăй пеккисемпе кăна пурăнма.

Çиттĕр, килтĕр, ыр чунсемшĕн пурнăç!
Шанатăп чунăм пысăк пулнăран.
Кам ĕненмест – чуллă чунлă – курăр,
Вăл нихăçан пулаймĕ кăмăлрах.

Ырă чун вăй хурать пĕлтермесĕр:
Кашни çыншăн вăл хатĕр кĕрешме.
Начар кўршĕ пулать тăшман «мэрĕ» –
Пĕрле пултарĕç ырра вĕлерме.

Чунли халсăрах – вăл пĕр-пĕчченĕн –
Усалпа кĕрешет пултарнăран.
Кĕрешекен кирлĕ мар – пĕр енлĕн
Аванрах-çке пурăнмашкăн куран:
Эс пулсан çĕр çинче Путин евĕр –
Калĕç: – Кирлĕ мар чăрмантаракан!

Анчах! Ĕç çеç илемлетекенĕ –
Тĕрĕслĕхе, чунлăха туптакан.
Халĕ пурнăçăн чăнлăх пĕр енлĕ –
Суя укçа хуçа пек патшаланать.
Кашниех пуçне тытнă пĕркенчĕк:
Чĕр маска, чăнах, хамелеон пек.

Милици тăрăшать стройбат евĕр,
Ун тивет пытанма криминалран.
– Мĕншĕн çапла хăтланать? – пĕлетпĕр:
Вăхăтсăр каяс килмест пурнăçран.

Укçа вылять политика майлă,
Унсăр та экономика пулмасть.
Гербарири политиксен айлăм –
Хулăн укçа айсбергĕ – çăмламас.

Çакаççĕ, хăратаççĕ пуясшăн –
Катастрофа кĕтет тĕрĕссине.
Чухăнсемшăн хатĕрленĕ ясмăк,
Кунсерен хăпартаççĕ хакне.

Никама кирлĕ мар эс укçасăр:
Тăван ачу та юратмĕ сана.
Ĕçсĕрех макăратпăр пулсассăн
Шутлавра çеç аса илĕç çынна.

Тĕшмĕш-тухатмăш вăйăи ав курăр!
Чăн гипнозсăр ăна çук чакарма.
Эпи карчăк, вăл пачах урăх –
Вĕренчĕ укçа-тенкĕ йăкăртма:

Вăл пулăшу çынна панă ĕлĕк,
Халь вĕçевçĕ суеç – укçаллă шăна.
Ялтисемшĕн экстрасенс ку тĕлĕк –
Улах – çарансен хурхухĕ кăна!

Хула та ял шырарĕç пĕрпеклĕх.
Тупрĕç пулас ултавпа суяра.
Çынна мĕн çитмест? Пурте çитеклĕ,
Укçа чуна валли мар – алăра;
Бумеранг ырри – халăхра!

Улшăну ĕмĕрех çапла пулнă:
Аванлатни – те пур? Яланхиллех.
Ĕмĕр ĕçли те халь бомжа тухнă:
Вăлах укçасăр ишак пек ĕçлет.

Бумеранг çеç – çынра мĕнех пултăр?
Кашниех пурăнать арантарах.
Çирĕппи çынна маннă, вăл – улăп,
Уншăн тăтăр çын хуйхи аякра.

Капла мĕнле пулать пурнăç пирĕн?
Утма – ни малалла, ни каялла...
Данире пурăнаççĕ урăхла.
Халь вĕсем йывăра пĕрле сирĕç:
Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн – чухлар.

Чăтма çук пурнăçа вараласçĕ –
Кашниех – мĕнле кирлĕ çавăн пек.
Вăхăтсăр сÿннĕ тимĕрçĕн лаçĕ –
Туптаймăн унта хĕçе кирлĕ пек.

Этемлĕх суйма вĕренсе çитрĕ;
Алла алă çунине хăнăхан.
Пĕрне сутаççĕ пулсассăн çиччĕн –
Влаçа тустарĕ çитмĕл çич çăхан!..

Этем чунӗ вӑркать вӗҫӗм-вӗҫӗм,
Пултараймӗ канма кӗрекере.
Пурах-ши аванмарлӑхӑн вӗҫӗ?
Вӗренӗн вӗҫӗ тухать пурпӗрех.

Халӗ хӑрама манса пыратпӑр,
Туптаннӑ, пулас, кашни нишлӗхре:
Язва уҫӑлнӑ пек пит асаплӑн
Ҫын чунӗ сурать кашнин кунсерен.

Эпир курса ҫитӗннӗ танмарлӑх
Тахҫантанпах макӑртать халӑха.
Куҫҫулӗ юхать савӑнтарманшӑн –
Хӑварнишӗн ҫын чунне тӑлӑха.

Ҫынлӑха хӗстерен сассӑр хӗскӗч
Хӗсет те хӗсет хӗрхенмесӗрех.
Хӗсӗрлесе пынӑран-ши хӗсӗк?
Е каясшӑн-ши пурте «ҫӗн ҫӗре»?

Этем мӗншӗн-ши пайланасшӑн?
Латти ҫук та, килӗшӳ те пулмасть...
Капла апокалипсис аслашшӗ
Пуян ӗмӗре килӗ ҫывратма...

2

– Вут-ҫулӑм кӑварӗ пӗтнӗ, – тесе
ӗнентерчӗҫ-ҫке атте-аннесем.
– Вӑрҫӑ-харҫӑ ҫӑварӗнче, – вӗсем –
ҫулӑм та тухмасть, – тесе, ӗненсех
Ҫӗре кӗчӗҫ пурӑнса ерипен:
Тӗрӗс вилӗм ватӑлсан ҫитмеллех.

Ӗненме тем пек йывӑр – пӗлмелле.
Мӗнле май каласа ӑнлантарас?
Пурпӗрех тӑшманпа кӗрешмелле –
Пӗрлӗхре хӳтӗленсе пурӑнас –
Хурапа шур тӗсе вараласан,
Ҫӑвара пӑрлӑ шыв ҫеҫ хыптарсан...

Нумайӑшӗ «шӑнса та пӑрланса»
Ҫухатрӗ ӑшшине ҫын чунӗнче.
Пурте вараланчӗҫ пылчӑкланса –
Ар ҫын та хӗр ар кӗркуннесенче:
Йывӑҫ ҫулҫи евӗр ӑслӑ ҫынсем

Тăканаççĕ çӳп-çапланса – кичем.

Вăрçăран та вăрçă евĕрлех, тен?
Çутă кун ма сахалланать пĕрин,
Теприн те виççĕмĕшин? ...
Пирĕн тăнăç çынсен ачисемех! –
Вулканлă мăнуксем – фашист пекех.

Кăлтăр-кăлтăр кивĕ алармана
Ярас пулсан каялла çавăрса,
Паллах, пулмасть çăнăха авăртма.
Ун пек тума ... кирлĕ мар, иçмасса.
Ухмаххисен çуртĕнче-иç кăна
Пĕлеççĕ çапла хăтланкалама.

Çӳлтисем хатĕр çынсемшĕн пуйма:
Çыннăн пурнăçĕ шухă шлаттарать:
Шур кулачă мар, çăкăр та памасть
Халь çырнишĕн илекен гонорар.

«Ĕçпе çеç тăран», – тени харама
Çухалчĕ, пулас, çĕршыври сăнар.
Пуякансем пĕлеççĕ çаратма –
Кам пулмаллине юнашар...

Таптаççĕ акă хĕрхенмесĕрех –
Шеллемеççĕ çутă ăслисене.
Пĕтермелли юлмасан «сентрере»
Тивеççĕ черетпе тăвансене!

Çăмăл хĕстерме чунлă халăха
Этем прави те йĕрки çук пулсан.
Пур саккунра тăвать шуйттан суха –
Шăши хӳрипе шăлать хыçалтан.

3

Шанман пулсан çӳлти лашасене
Курмастăмăрччĕ çак нушана.
Халь хĕстерсе мĕнпур ыррисене
Хĕн куратпăр – пĕр Турра шанас.

Иконсене переççĕ икĕ вĕçлисем:
– Турăпа шуйттан пĕрле! – тесе.
Ĕмĕр çынсемшĕн Турăпа тăрăшнисем
Юмăçа çеç ĕненмĕç сиссе.

Чухăн кăна ĕçлет шансах Турра –
Ан ĕненччĕрех пуяннисем.
Ялан та пĕрле утнă сукмакран
Уйрăлаççĕ çывăх тăвансем.

Типет-çке чун хуран хуппи пекех:
Туйма йывăр пулĕ ăшшине.
Курма тӳр килĕ пулсан кун пекех
Чунсем вырăнне чул ларнине.

Шалчана тимĕрçĕ шĕвĕртнĕ пек
Шахвăртаççĕ ялан пĕр-пĕрне.
Вĕсем хутшăнмĕç чун юлташĕпе:
Юратать укçа пуяннине.
Инкек чухне кăна-иç çавсемех –
Асилеççĕ чун пахалăхне.

4

Асфальт айĕнчен шăтса тухнă курăк
Пулаймĕ нихçан та яш тӳрĕ.
Хĕн-хур айĕнче çуралнă çын урăх –
Никама пăхăнмасăр çӳрĕ.

Тяп-тяппи-тяппи утаканçă пĕчĕк
Ача тата тринкки путекĕ
Пĕр пек пулнине асăрхатăн: ĕçĕ
Вĕсен çавăн пек, ӳссен – тепĕр.

Çапла пулнă та яланах-ши пулĕ?
Ачасем те тĕслĕх илеççĕ:
Халĕ вара ашшĕ пек пулмĕ улĕ,*
Хывмĕ-çке амăшне пикеçĕ.

*ывăл

Пăхăнтарать çут çанталăк саккунĕ:
Йăлт упрамалли веçех кирлĕ.
Нимĕнле чĕр-чун пурăнаймĕ унсăр:
Саккуна пăсакан – вăл ирсĕр.

Çынçиен тымарланни кама кирлĕ?
Сăлтавне шыраканĕ туптăр.
Шуйттанĕсене парсан эпир ирĕк:
Ырсем валли савалĕç тупăк.

Çемçен ӳкмешкĕн мамăк мар эп – тертлĕ:
Тĕк тӳшек те мар чăнлăх – каçă.

Атте-анне: – Хĕрĕм, тăрĕс пурăн, – терĕç, –
Сут – аялти патшалăх – çăтмахра тумаççĕ.

5

Çĕрпе пĕлĕт калаçнă лек
Çӳретĕп чĕлхесĕрех.
Эпĕ – итлемен тилхепе:
Туять аманнă чĕре.

Çăлтăрпа калаçам чăнне.
Эпĕ яшсем ыйтнă пек
Ыйтмастăп юрату: анне
Хушман – Тур ирĕкĕпе.

Тур мар-тăк, кам парĕ мана?
Шăпа çанталăкĕ – тӳс.
Турăна кам пĕлет ăна?
Пулĕ пĕчĕк çеç пĕлӳç –
Шĕвĕр какăрлă кĕтӳç.

Çĕр çимĕçĕ шăп ӳснĕ пек
Ӳсмест ача шавсăрах.
Поэт «чыхăнса» пынипе
Кăларать сас сăвăран.

Ăспа ӳсни тăсать алне –
Теприне туртать пĕрле.
Усал курасшăн мар ĕçне:
Пур ăмсанупа кĕрлет.

Çук мар, пур тĕслĕ ăмсану –
Пĕтерме ăс кирлĕ мар!
Тапалану – аталану;
Кĕвĕçекенни – тăшман!

Кĕвĕçӳ хур парать йăлтах:
Чуна çиет шĕкĕ пек.
Чунсăрри пурăнмасть таçта –
Вăл юнашар – вăлтипех:
– Ача валли, – вăлтать текех –
– Секс* кирлĕрех, тăсать ĕмĕре, – тесех:

* Британинчи 103 çула çитнĕ хĕрарăм хăйĕн ĕмринче арлăхпа çыхланса курман.

Пĕтересшĕн-çке çамрăка:
Усалсем – юнне кура:
Вампирлăх – таврăнать хуçа...
Çавсем йĕрлеççĕ сăвăça
Пит те кăран:
– Чăтаймаççĕ! – тет ырра.

Йĕплĕ çăкăр постăнне
Тутансамччĕ сăвăç пек –
Туймашкăн чун çухалнине:
Хывнă наркăмăш кĕпер!*

*наркотик

Ытла та шел этемлĕхе:
Пăсса этем правине
Пăхăнайса эсрелĕхе
Пĕтерет чун хуçине.

Мĕн тăвăн пурнăç саккине
Савалаймăн савапа.
Çын чĕнтĕрленĕ саккунне
Йышăнса тăван тупа;
Этемлĕхре пур шăпа.

6

Ĕмĕр-ĕмĕр йăнăшнă этемлĕхе
Çĕнеймĕ тĕрĕслĕх тӳрех.
Курмĕ, пĕлмĕ йышăнма çĕнĕлĕхе
Килсессĕн те чăнни тӳртен..

Ятарласа хуратать пĕр теприне:
Мĕн юлĕ çынсен чĕринче?
Курайманлăх чунра мĕнле ӳснине
Ăнлантарĕç милицинче.

Йĕркесĕрте çуралнă халăх ачи
Ăçтан пĕлейтĕр йĕрке мĕнне?
Пиçнĕ пучахра – расна тырă пĕрчи;
Пĕлмĕн пуçтахăн тĕллевне.
Пултăрччĕ лайăхран лайăх нумайрах –
Чармасть никам ĕмĕтленме.
Усалĕ халăха килет çылăхран:
Выçлăх йытта та шеллемест.

Килĕсенче мар, урамсенче паян
Усалланаççĕ ачасем.

Наркотик-шӗвекпе пуясшӑн наян
Усламланать киленсех.

Кущевски пурнӑçне Чӑвашра куран
Ку аталану вӑхӑтра.
Çамрӑклӑх пулса тӑчӗ чӑн-чӑн чура –
Аманнӑ тейӗн вӑрçӑра!!!

Ӑçта илсе каятӑн эсӗ пире,
«Хуçӑлнӑ турат çамрӑклах»?!!
Çухатса чысна чунна киллентерен –
 Япӑх çын сутӑннӑ, кулать:
Хырçӑ вӑрçи укçа кумать.

Паравоза хирӗç çӑмӑл мар пыма:
Нуша хӑвалать тӑваллах.
Лартса ярсан пӑрпа мӗскӗнӗн кайма
Çапӑнатпӑр ту-çыранпала.

Чӑрсӑрлӑх, курайманлӑх çапӑçтарать
Танмарлӑха чӳхентерсе.
Тӑкрӑм ӗç çӑкӗнчен тухакан тара
Пӗр тан пурнасшӑн кӗрешсе.

Ытла та чухӑн çын – пӗлен! – пурнӑç мар:
Хӑшӗ пур пач ӗçлемсенни.
Эпир пӗлместпӗр пӗрлӗхре пурӑнма:
Пӗтерет «Атӑла»* сикни.

* *Чӑваш эрехӗ*

Ирӗклӗ чун – ирӗксӗртен «кӑвакрах»;
Мӗн ыйтӑн кӗлленнӗ чунран?
Ыр юрӑ юрланӑ кашни çамрӑках
Пӗтрӗ сасси улталансан.

Ан васка тиркеме кӗлленнӗ чуна!
Усси пулӗ сӑнарӗнче:
Çамрӑка шанчӑкпа юрату сунар –
Кашни пултӑр çын вырӑнче.

### *Эпилог*

Эпӗ хыврӑм юрӑ – баллада
Çын епле пурӑнни çинчен пит чухӑн.

Çулăм витĕр утма тиврĕ мĕн чухлĕ,
Çавăн чухлĕ çунтарчĕ ватлăх.
Расна шăпа, эпир мĕн чухлĕн.
Хăшĕсем кăткă пекех пурăнаççĕ.
Хывман вĕсемшĕн капăр, кĕмĕл каçă:
Çамрăксем-çке пĕтеççĕ – чухлăр.

Ахаль çынран мĕнех ыйтайăн –
Усăллăрах пулĕ качака сĕчĕ.
Пурте эпир кашниех питĕ пĕчĕк:
Çамрăкки ал сулнă ытарлăн,
Маттури ватă – мĕн тăвайăн?

Камшăн мар, хамăншăн пит «хаклă» –
Чĕре тапмасть чун «типнине» курсассăн.
Арçынĕ юбка тăхăннă пулсассăн
Ывăлĕ вĕсен – вандал – паллă.

Чунĕ çынсен ыратмасть мĕншĕн?
Хушăнать-çке начарри – кама кирлĕ?
Ирех çын выçă – каçхи апачĕ ирсĕр:
Чухăнлăхра мĕн çитĕр мĕскĕн?

Ĕç тупмасăр халтан кайсассăн
Ыр йăхри ачана та вăрра ертĕç:
Унта пур-çке – çителĕклĕ эрехĕ;
Тиркемĕç – çын пуçне... т кастарĕç!..

Унта та – «пурнăç» – камсем пуйĕç,
Тен, хăшĕсем тӳрех пуçне çухатĕç?
Вăл ушкăна пурне те илме хатĕр:
Ку пачах пĕлме çук-çке – уйрăм.

Паллă – унта эпĕ пулаймăп:
Олигарха та, бандита та – хирĕç!
Савнине савсан – ĕмĕрлĕхех: Алла
Пугачева пек темиçе саваймăп.

Усалсенчен хăтартăр Турă –
Çылăх тухтăр – иккĕ пурăнмастăп –
Никама сӳтсе-явма хăймастăп:
Эпĕ – ача амăшĕ! Курăр.

*Пуш уйăхĕ 2011.*

40.03

**КЛАВДИЯ ИВАНОВНА ВИШНЕВСКАЯ**

ПУРНĂÇ ИККĔ КИЛМЕСТ

**Жизнь не приходит дважды**

**Баллада**

Перевод автора с русского языка

Компьютерный набор *К.И. Вишневская*
Редактор *Э.И. Эльф*
Компьютерная верстка *А.Ж. Арамян*

Подписано в печать 05.12.2015. Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Arial cyr. Печ. л. 0,75. Тираж 500 экз.

Ч-48331

г. Чебоксары, пр. М. Горького, 24.

...нальная библиотека
...кой Республики